Материал представлен из коллекции электронной библиотеки «Писатели Чувашии – детям» – **pchd21.ru**
Электронная библиотека создана Чувашской республиканской детско-юношеской библиотекой **– www.rdub21.ru** – на средства гранта Президента Российской Федерации для поддержки творческих проектов общенационального значения в области культуры и искусства

## Автор: Яковлев Иван Яковлевич

## Книга: Выртмара

## Рассказ: Хăравçă Иван

Иван амăшĕ кăвас хунă та, йӳçтĕр тесе, ăна кăмака çине лартнă, хăй кӳрше ларма кайнă. Тĕттĕм пулсан, Иван урамран киле таврăннă. Чĕнет ку, – пуртре никам та çук. Хайхискер хăйă çутма тытăнать, кăмака çинче кĕç темĕскер пăшăл-пăшăл тунине илтех каять. Ахăр хĕрт-сурт пулĕ ку тесе, Иван шартах сикет те хăййине пăрахсах тара парать. Васканипе тĕттĕм çĕрте турчка тимри çине пусать. Турчки кăна пит аван – шап! тутарать çамкинчен. Иван: – Ах, атьсем, килсе пулăшăрах! – тесе кăшкăрса ярать те тарма тытăнать. Инкек çине сенкек: çав вăхăтрах ун ури салтăннă кайнă, Çăпати кантри алăк хушшине хĕсĕнет те**,** Иван пăлтăра тăсăлса та ӳкет.

– Ай-уй! пĕтрĕм-çке, хĕрт-сурт тытать, кӳршĕсем килсе çăлăрах! – тесе вилес пек кăшкăрать, тет. Иван патне кӳршисем чупса пыраççĕ те йăтса тăратаççĕ, тет. Иван ни вилĕ, ни чĕрĕ, тет.

Кайран хайхи пĕлсен, Иванран кула пуçланă:

– Епле эсĕ йӳçекен чустапа кĕтесри турчкаран хăрарăн? Çитменнине тата ху урунти çăпату та хăратнă сана, – тесе кулнă, тет унран.

Все тексты взяты из открытых источников и выложены на сайте для не коммерческого использования.
Все права на тексты принадлежат только их правообладателям.